К С(ЧУВ)
Э 67
18516. чув.

Энтип Ваççи



# Çăлкуç

Национальная библиотека ЧР
4-018516

М 18516 чув

КФ
К С(Чув)
Э 67

Энтип Вăççи

# Çăлкуç

сăвăсем
поэма



Чăваш кĕнеке издательстви
Шупашкар — 1974

Энтип Ваççи (Антипов Василий Иванович) 1937 çулхи январěн 17-мěшěнче Куйбышев облаçěнчи Клевле районне кěрекен Хура Шыв ятлă ялта çуралнă. 1956 çулта вăтам шкул пěтерне хыççăн клуб заведующийě, «Ленин çулě» колхозри комсомол организаци секретарě пулса ěçленě. 1958 çулта Шупашкара килнě те малтан стройкăра тěрлě ěç тунă, унтан, лепщик специальноçě туянса, çуртсене илемлетнě, 1961 çулта завода куçнă — автоматика цехěнче ěçлеме пуçланă. Çав çулах Мускав энергетика институчěн Шупашкарти филиалне автоматикăпа телемеханика уйрăмне вěренме кěнě. 1963 çулта, институтри вěренěве пăрахса, Çěнě Шупашкара ěçлеме куçать, пěр вăхăт нумай тиражлă хаçат редакторě пулса ěçлет. 1968 çултанпа КПСС членě.

Энтип Ваççи сăввисем пуçласа 1957 çулта Тутар республикинчи Лениногорск хули хаçатěнче пичетленнě. «Çăлкуç» — сăвăçăн пěрремěш кěнеки.

С(Чув.)2
Э64

Э $\frac{0763-0104}{М136(03)-74}$ 98—74

М18516-чув

Чувашская республиканская
библиотека
им М. Горького

© Чувашское книжное издательство, 1974 г.

ПРОВЕРЕНО
20

* * *

Тăван чĕлхем — пин хĕлĕхлĕ кĕслем!
Сан сассусен килĕшĕвне епле пĕлсе çитем —
Хальччен пулман çĕн ĕнерӳ тупса,
Тĕнче илтмен çĕн юрă кĕвĕлем.
— Епле чунун çӳл тӳпине, этем,
Çав юррăмпа тата çӳле çĕклем?..

## 1945 ÇУЛ

Тухаççĕ хĕрлĕ пуйăссем — тухăçран.
Анаççĕ симĕс пуйăссем — анăçран.
Ташша çапаççĕ салтаксем — станцăра.
Чечек çыххи пек кулăсем — кантăкра.
Иртсе каяççĕ пуйăссем — тĕттĕме...
Хуплаççĕ йӳçĕ тĕтĕмпе — питĕме.
«Каçарăр!» теççĕ, хурлăхлăн кăшкăртса.
Юлаççĕ тăлăх аннесем макăрса...

* * *

Эрне хушши турттартăмăр кĕлте.
Ывăнчĕ анне. Лаша та пит ĕшенчĕ.
Çул ту енне пăрăнакан тĕлте,
Суптăркаса çитсе, лăшт чĕркуçленчĕ.

Чуна çурса салхуллăн кĕçенсе,
Анне енне пăхса, пуçне вăл ухрĕ.
Ун алчăранă вутлă куçĕнчен
Пăчăртанса этем куççулĕ тухрĕ...

*Анне, хыпăнса ўкнĕскер, лаша умне вĕтĕртетсе пычĕ те чĕтрекен типĕ пўрнисемпе чўлĕке васкавлăн салтса ячĕ. Унтан, лаша куççульне пуçĕнчи тутăрĕн вĕçĕпе шăлса типĕтсе, ăна чунтан-вартан ўкĕтле пуçларĕ:*

— Тăрсам, тăванăм. Итлесем мана!
Хăвах пĕлен: ĕççи — хĕрўллĕ вăхăт.
Йĕтем çине çитер те кăрмана —
Сана эп, тăварса, шăварăп, пăхăп.
Часах ак мур илесшĕ вăрçинчен
Çынни, лаши — йăлт килĕç сыввăн-чĕррĕн.
Ун чух çаран çинче, ял вĕçĕнче,
Тиха пăхса эс çўрĕн кунĕн-çĕрĕн.

Те вăй илсе пĕр хушă каннăран,
Те хуçине вăл, ăслăскер, хĕрхенчĕ,—
Лаша, тармакланса, аран-аран
Чĕтревлĕ урисем çине çĕкленчĕ.
...Мекĕрленсе тĕртет лава анне.
Çĕр çырта-çырта, тапаçланать лаша та.
Пуçа чиксе кĕлте тăрри айне,
Эп те вĕсене... кăшт... пулăшатăп.

* * *

Эп ватрăм чул,
Çĕрне те чаврăм-алтрăм,

Эп тăм та çăртăм, çанă таварса,—
Хут хыççăн хут,
Çурт хыççăн çурт хăпартрăм,
Ăçта ĕç йывăр, çавăнта тăрса.
...Хăш чух эп пурпĕр тĕмсĕлсе вĕçеттĕм
Ĕмĕтĕмпе çырансăр уçлăха,
Алри ĕçпе те кăмăл кĕвĕçетчĕ,
Çук пекчĕ канăç та кун-каçлăха...
Çурт ӳснĕçем çӳле эп кармашатăп —
Хуллен...
Вĕçесчĕ спутникпе пĕр тан!
Çĕн эра усрĕ çыншăн кăткăс атом —
Эс пур çăр тăм, турттар тимĕр-бетон...
Яш-кĕрĕме çунат та, чап та кирлĕ.
Ĕçри çынна пуласлăх илĕртет.
Ман çавăнпа утас килет пит вирлĕн:
Ура — çĕрте, пуç — лектĕр пĕлĕте!
...Хыçра — çулсем.
Умра — çуртсем: шăп квáртал.
Чап мар-им çак?
Кĕресшĕн йăлт сăвва!
Ахальтен мар мана чĕнсе çул пачĕ Атăл
Асаттесем çуралнă çĕршыва.
Мухтавлă ĕç — вĕрен,
Ĕçле,
Пуç çĕмĕр:
Çунатлă çын хăять-и пуç усма?! —
Çĕн çăлтăрсем çутса, юмах пек ĕмĕр
Çул уçрĕ ĕмĕтри коммунизма.
Унта çитсен,
«Эс тивĕççĕр» теейĕмĕç:
Пуш аллăмпа пырса кĕрессĕм çук —
Çĕртен çӳле çĕкленнĕ ман çĕклемĕм:
Вăл — çĕн хула,
Çĕн квáртал,
Çĕнĕ çурт.

* * *

Роба, роба —
Паттӑрсен ӗç тумӗ,—
Шыв витми, вутра çунми брезент.
Ӗççыннин таса ятне хур тумӑн,
Тӑхӑнса тухсан сана ӗçе.
Канӑçсӑр, маттур, пуçтах романтик
Çийӗнче çуркаланса, ӗнсе,
Эс ӑçта кӑна çитсе курман-ши,
Самана пире ӗçе чӗнсен?
Хумханса, эпир çул умӗн ларнӑ
Çутӑ ӗмӗт чӗртнӗ вут умне —
Ун кӑварӗ пуля пек шӑтарнӑ
Чи малтан ман ӑрӑвӑн тумне.
Роба, роба,
Халь ак эсӗ çурӑк
Тӑвӑл витӗр тухнӑ парӑс пек.
Сан çинче çук питӗ вырӑн урӑх:
Сарӑхнӑ йӑлт эс ӗç тарӗпе.
Сан тӗсӳ халь — кивӗ бронза тӗсӗ.
Чаплӑ тӗс! — вӑл килӗшет сана:
Витӗмлӗ вӑйпа кӗрнеклӗх эсӗ
Куçкӗрет кӳрсе тӑран çынна.
Çавӑнпах пуль эс, ӗç тумӗ, чӑн та,
Тивӗçлӗ патвар çӗр хуçине.
Çӗр çинче епле тӑрать вӑл тӑн-тӑн,
Хӗвеле йӑтса ик хул çине.
Роба, роба,
Кивелетӗн хӑвӑрт.
Ӗмӗрӳ кӗске те пит хитре.
Юлашки хут эп сана кӗç хывӑп,
Уйӑрса ху ӑшӑтнӑ ӳтрен.
Савнӑ тумӑм, пӗл, шӑпу сан сумлӑ:
Вӑхӑт çитӗ — ӗçченсен тумне
Пуля тивнӗ шинельпе пӗр çумӑн
Хурӗç революци музейне.

* * *

Тăри чĕппи вĕçме вĕреннĕ евĕр,
Çунат çупса эп кĕтĕм яшлăха.
Ачалăхра курман пулсан та евĕк,
Нихçан та нăйкăшман эп кăлăхах.
Вăя ниçта чиксе хума пĕлмесĕр
Тар тухиччен çапаттăмăр ташша.
Çÿреттĕмĕр пуçа çĕре пĕкмесĕр,
Чун туртăмне юрасшăн тăрăшса.
Кăшт ытларах вăййа, тен, чупнă пулĕ
Е каскăнрах та пулнă пулĕ, тен...
Ăçта, мĕнрен пуçланĕ пурнăç çулĕ —
Пĕлсех кайман вунçиччĕри этем.
Анчах çакна манман нихçан, пĕрре те
Куç хывнă май çĕн палăксем çине:
Коммунистсен мухтавлă хурçă речĕ
Шанса кĕтет чăваш ачисене.
— Шанса? Мана? Чим, тивĕçлĕ-и эпĕ?
Мĕн тунă эпĕ тивĕçлĕ пулма?
Часрах ĕçе! Çитет çулсен хисепĕ
Бетон çăрма, ака-суха тума.
Комсомолла çунса, Корчагин евĕр
Кĕрер çĕршывăн пилĕкçуллăхне.
Симфони пек янратăр ĕç кĕрлевĕ,
Эпир чăмсассăн пурнăç вучахне.
Умра пуртан сÿнми тĕллев, ыр шухăш
Ĕçлес килет, пурнас килет тем пек.
Часах ак эп те хурçă рете тухăп
Хĕвел шевли пек çутă питĕмпе.

* * *

Ăс ăнлану ырать, чĕре ырать ачашлăх,
Куççем шыраççĕ килĕшÿ — илем...
Ачалăх тĕлĕк пек иртсе каять те, яшлăх
Çил-тăвăлла чĕнÿ илсе килет.

* * *

Утса иртетĕн те умран
Шыв витрипе —
Антан кайса юлап вара
Эс хитрипе.

Тĕлĕнтермĕш!

Хăйса чĕнетĕп, тĕл пулсан,
Йăмра айне.
Калатăн эсĕ, йăл кулса:
«Ямасть анне...»

Кулянтармăш!

Хыпса-çунса çурту тавра
Çӳреп ирччен.
Аннӳ, савса, сĕнет сăра
Чӳречĕртен.

Чун çунтармăш...

Чеен пăхатăн ман енне
Тепĕр кунне.
...Йăмра айне пыма чĕнен,
Пĕве умне.

Ильентермĕш...

* * *

Тин тухнă чĕпĕ евĕр шимплетсе,
Çурхи тумла ӳкет кӳлленчĕке.
Пӳлĕмĕнтех эс ларăн-шим, илтсен
Ун сассине? Епле кӳренчĕк эс.
Шимп! Шимп!

Шимп! Шимп!
Çурхи кĕвве эс илтмĕн-шим?

Сар пĕсехеллĕ симĕс кăсăя
Юр шывĕпе чӳхет çунаттине...
Пĕлместĕп, тен, çак сисĕмĕм суя:
Чуна уçма самант çитет тинех.
Шимп! Шимп!
Шимп! Шимп!
Çак саманта эс сисмĕн-шим?

Эп — саншăн, маншăн эс — пӳрни: пĕлен
Çак чăнлăха. Кирлех-ши ӳкĕнӳ?
Чăнкăртатса черчен пӳрнипеле,
Чӳречӳне уçать çурхи чĕнӳ...
Шимп! Шимп!
Шимп! Шимп!
Çак чĕнĕве эс илтмĕн-шим?

* * *

— Илемпиçĕм, савнă Илемпиçĕм,
Мĕншĕн сан туту — тăм тивнĕ иçĕм,
Куçунта йăлтăртатать тип çиçĕм?
Хуйăхна санне мĕнле эп виçĕп,
Илемпиçĕм, савнă Илемпиçĕм:

Ансăртран сана эп кӳрентертĕм...
Пĕр сăмахпа —
Киревсĕр, чăрсăр, сивĕ сăмахпа...

Илемпиçĕм, савнă Илемпиçĕм,
Сан туту — хĕвел чуптунă иçĕм,

Ик куçу тулли ачашлӑх, сисӗм —
Телейне санне мӗнле эп виçӗп,
Илемпиçӗм, савнӑ Илемпиçӗм:

Самантрах сана эп савӑнтартӑм —
Пӗр сӑмахпа!
Асамлӑ, имлӗ, ӑшӑ сӑмахпа...

* * *

— Çӗр эсӗ,— тетӗп эп сана.
— Илемӳпе асамлӑхна туяннӑ эс Çӗртен.
Ыр шӑршипе минӗретен хура çӳçӳ
Сӗт тӗслӗ чӑмӑр кӑкӑр çиййӗпе
Пӑрасна пек кӑпӑкланса выртать.
Туту çинчи пылтан та тутлӑ нӳрӗ,
Чи симлӗ эмел пек, юна чӗртет.
Кӳлемлӗ, килӗшӳллӗ кӳлепӳ:
Авӑнчӑксем епле кал-кал мӑкӑрӑлма пуçлаççӗ майӗпен..
— Çӗр эсӗ,— тетӗп эп сана.
— Мана Çӗр евӗр эсӗ илӗртен.

— Хӗвелӗм,— тетӗн эс мана.
Сан вут-хӗлхем çӳçӳ, ачаш куллу — йӑлт Хӗвелтен.
Кӑвар туту кӑшт сӗртӗнсен ӳте,
Вӗри аллу савса çупӑрласан,
Пӗл: Çӗр-пикешӗн çуркунне çитет —
Сӗтек тапса тулать чечек папки ӑшне...
Ирӗлтерсе çири шур юр витте,
Юрат мана ун чух, Хӗвел-этем,
Ӑшшупала сив çилсенчен,
Хаяр тӑвӑлсенчен хупӑрласа...
— Хӗвелӗм,— тетӗн эс мана.
— Çӗрпе Хӗвел юратӑвӗ пирте.

## ЧĂВАШ ЮРРИ

*Тăван сăмаха, тăван юрă-*
*кĕвĕсене чунтан-вартан*
*юрататакан хисеплĕ тусăма*
*П. К. Андреева.*

Тăван кĕтес юханшывне, çĕрне
Юратнăран пулас, мехел çитсен,
Эп симĕс хумлă Çарăмсан хĕрне
Килетĕп çĕр касма — кăвайт чĕртсе,
Кунта ирччен рехетленеп вара.
Вутпуççисем, шăрт-шарт туса илсе,
Вĕри хĕлхем сапаççĕ ман енне.
Çерем çинче выртатăп итлесе
Эп, хускалмасăр, çулăм юррине.
Темле чĕнӳ вăл çуратать юнра...

Сасартăк çулăм витĕр инçетре
Куратăп вут çилхеллĕ тур утсем.
Шыв юххи пек юртти вĕсен хитре.
Мĕскершĕн кĕçенмеççĕ-ши вĕсем?
Тăпăртатса чупни те илтĕнмест...
Васкавлăн йăпшăнатăп çĕр çумне —
Илтетĕп темшĕн урăх сасăсем.
Ăçта утсем? Тӳпе вĕсен çулне
Хуплать, çутса вĕçевçĕ çăлтăрсем...
Кăвайт хавассăн ялкăшать, сӳнмест.

Юхать ват Çарăмсан кăшт чӳхенсе.
Çӳп-çап, шур кăпăк авăрта ташлать.
Тин шывран тухнă çилĕ, çӳçенсе,
Хăва çулçисемпе питне шăлать.
Хумпа вылять ял çутисен шевли.
Çак самантра тăçтан, сĕм-тĕттĕмрен,

Тухать те çепĕç кĕвĕ чĕтренсе
Шыв çийĕпе салхуллăн та хитрен
Шăнкăртатса юхса каять, сӳнсе:
Ăна вĕçлет чĕнӳллĕ хĕр кулли...

Тухма пуçланă чĕпĕ пек чĕре
Кăрт-карт туса илет те шăпланать.
Çанçурăм çӳçенсе каять, чĕтреп...
Мĕн-ма вĕçленчĕ юрă? Кам ăна
Пуçларĕ те тăсмарĕ малалла?
Анчах кĕвви татах çуралчĕ ун!
Ăна çĕнет-ха çил, хуллен вĕрсех.
Сисетĕп, манăн пăшăрханнă чун
Илтет ăна... Вара хĕпĕртесе
Кĕтетĕп çитессе вăл кунталла.

Чăваш юрри... Мĕнле вăй пур санра?
Мĕнпе эс кăмăла çĕклентерен
Е ăш вăрканă йывăр самантра
Сăмахупа ырра ĕнентерен?
Мĕн-ма чи кирлĕ чух килен аса?
Чăваш юрри! Кĕрле — эс ирĕкре!
Тӳпӳ сан çӳллĕ, ăнăçлă шăпу.
Хавхалантар кĕввӳсемпе пире,
Хаваслăрах, çунатлăрах эс пул —
Янра, ху халăхна савăнтарса.

...Шăкăлтатса кусать шыв леш енче,
Çул тăрăх, шултăрканă урапа.
Ял пикисем, тухса уй хапхинчен,
Килĕсене васкаççĕ — юрăпа
Кичемлĕхе сиреççĕ çул çинче.
...Çуллахи каç ытарайми хитре,
Анчах кĕске. Кăвайт йăлт сӳниччен
Шыва хупланă ыйăхлă тĕтре.
...Канаççĕ юрăсем те çĕн ирччен
Ĕçчен чăвашăн çепĕç чĕринче.

* * *

Кивĕ Атăл... Вăхăт иртнĕ хыççăн
темĕнле хăрушă тĕлĕк пек
курăнать вăл, шухăшпа эп иртнĕн
ĕмĕрсен асаплă çулĕпе.
Илтĕнсе каять те хурлă юрă —
куç умне тухать çыран хĕрри:
бурлаксем унта туртаççĕ парăш...
Мĕскĕнсем! Ĕшеннĕ çав тери.
Вăравай вĕренĕ хырнă юнлă
хулĕсем касăлнăран тарпа
йынăшкаласа вĕсем утаççĕ
юрă майĕн йывăр утăпа...

Çĕнĕ Атăл... Çĕкленсе хум çийĕн,
çаклатса çиле ялав вĕçне,
«Метеор» — çунатлă шурă лайнер —
çитрĕ ак шăп çав çыран тĕлне.
Чĕнтĕрлĕ кĕпер — сĕрен кĕперĕ —
кĕвĕ каласа юлать çӳлте.
Çыранта крансем, ав, каçа хирĕç
çăлтăрсем çĕклеççĕ пĕлĕте.
Савăт-улăп леререх мăнаçлăн
тĕтĕм кăларать чĕлĕмĕнчен...
Нимĕнпе танлаштармиилемлĕ
панорама куçăм умĕнче.
Кăнтăрла, çĕрле куçа хупмасăр,
ывăна пĕлмесĕр киленме
ĕçлĕ Атăл сăнĕпе эп хатĕр.
Кам юратмĕ çакă илеме!
Мĕн тума пире Венеци чапĕ?
Хамăрта та пирĕн чап çук мар.
Ăçталла пăхсан та — паллă вырăн.
Мухтамасăр майĕ çук чăтма.
Тĕлĕнетĕп: Сарă кун çĕршывĕ

тухрĕ пулĕ чăннипе ума —
хулисем епле ун килĕшӳллĕ,
çыннисем — ĕçчен, патвар, юмарт.
Атăл хумĕн кăтрине туранăн
ГЭС пĕвин тимĕр-бетон тури,
çĕнĕ саманан çĕн гимнĕ евĕр
янăрать шывсиккисен юрри.
Вăтăр виçĕ пăхаттир пĕр харăс
тухнă пек çĕн тинĕс хĕррине,
чăнлăх çутине çутса утаççĕ
хурçă юпасем уй-хир енне.

## НУША УРАПИ

Хăраса вăрантăм хăнара —
Варкăшать йӳç тĕтĕм ман тавра.
Чим-ха, ырра мар пуль ку, тесе
Аслăк çинчен антăм эп сиксе.
Ак мĕн куртăм алăк уçсанах:
Картишне вут хунă пуçана.
— Мĕн канма памасть мана пуртту?
Ытлашши пулас, хуçа, вутту?
Эп вăранасса кĕтмесĕрех
Темĕн çĕмĕретĕн ир-ирех...
— Кĕрĕ ку хресчен историне:
Çунтарап нуша урапине,—
Терĕ пуçана, мана пӳлсе,
Тĕнĕл татăкне вута персе.
— Лаша вырăнне ман аттене
Панă ваттисем çак парнене.
Чыхăнса тăваллара юнпа,
Туртнă нушине вĕсем унпа.
Икĕ кустăрма та ик турта —
Кирлĕ мар вите те, ăйăр та.
Хăвăн транспорт — кӳлĕн те юрттар...

Милĕксĕр, ăшшисĕр тухĕ тар.
Кур-ха: туртине, тăварлăран,
Хырнă выльăхсем çурри таран...
Лупасайĕнче, чуна шăнтса,
Вăл ларатчĕ вырăн йышăнса.
Вырăнĕ — гаражлăх пӳлмелли:
Мотоцикл илтĕм — кӳмелли!
Çавăнпа нуша урапине
Çунтаратăп — пĕттĕр ĕмĕрне!
Çул ан уçтăр тек чăваш килне —
Вĕçтерсех ярап çилпе кĕлне.

* * *

Шулапран шит тăршшĕ шĕвĕр шӳкĕр
Çакăннă çĕркаç — халь ирĕлет.
Самантра тăпрас çине вăл ӳкĕ:
Тĕтреленнĕ тухăç хĕрелет.
Тасатать тĕкне шур кăвакарчăн
Тăм шуратнă шертĕ тăрринче.
Ĕнине вăрçать йӳтенĕ карчăк —
Пăсланать апачĕ кункринче.
Ылтăн тĕклĕ ват автан мăнаçлăн
Авăтать, çатан пасне тăкса.
Çамрăк кин пусма çинче хаваслăн
Карăнать, кăмкан патне тухса.
Ирĕ ир пекех пулин те, темĕн
Систересшĕн вăрттăн, юптарса.
...Пĕлĕт хĕррипе вĕçет илемлĕн
Кĕмĕл шӳкĕр кĕмĕл юхтарса.

* * *

Ялта пĕр-иккĕ пуль ун пек çуртсем.
Унран халь аслăрах ялйыш мунчи.
Вăл пахчара ларать пĕччен, çĕрсе.
Çĕр ăшĕнче кил пуçĕ — ыр мучи.

Тек тётём палкамасть çурт мăрийинче.
Шăлт! уçăлмасть ун алăкĕ ирех...
Сăнатăп та ăна пĕррехинче —
Вăл... шур сухалăн пуçĕ евĕрех!
Шĕлепкине вăл лартнă кăшт пусса.
Çуталнă куçĕ анăç шевлипе.
Ялти çуртсем çине чеен пăхса,
Вăл сăмахласшăн пек ывăлĕпе:
«Эп хамăнне ирттертĕм пурăнса.
Сăлтавсăр сӳнтермерĕм вучаха.
Нуша манран иртмерĕ пăрăнса —
Ăна çĕнтернипе кунçул паха.
Пуçланчĕ, сӳнчĕ пурнăç пĕрре мар
Ман анлă, тăн-тăн саккăмсем çинче...
Халь çĕн çуртра,— вăл ман пек мар — катмар,—
Çитес кунсен сасси янрать çинçен.
Тĕнчи çапла: йăлт çĕнелет, ӳссе.
Шăп çавăнпа илемлĕ çут тĕнче...»
...Çурт ыйха путрĕ, хускалса илсе
Никĕсĕпе тачта, çĕр ăшĕнче.

* * *

Колхоз правленийĕ ун чух хура пӳрт пекчĕ,
Йӳç тĕтĕмпе тулатчĕ ирсерен:
Чике таран чикаркка пĕтĕрсе,
Ĕмпиччесем вăрçатчĕç чĕререн
Пуçлăхсене, хресчен хутне кĕрсе...
Колхоз правленийĕ ун чух хура пӳрт пекчĕ.

Колхоз правленийĕ халь аслă та илемлĕ.
Ялти чи паллă чĕлĕмçĕ Кĕçтен.
Тĕтĕркĕчне тирпейлĕн сӳнтерсе
Кунта кĕрет, ĕççи пуçланиччен
Пуçлăхсенчен канаш ыйтас тесе...
Колхоз правленийĕ халь аслă та илемлĕ.

## ЯЛ ЮРРИ

(Халăх юрри майлă)

Хăвалăхри хăва авма меллĕ —
Ĕнчĕ карта тытрăм ял тавра.
Хăвартăм хăнасем, ай, кĕмелĕх
Çичĕ алăк çичĕ урамра.

Килĕр, тăванăмсем,
Кĕрĕр, туссем,
Çичĕ енчен çичĕ алăкран.

Хырлăхри ырлăхра ӳснĕ хырă
Сар пура пĕрени пулнăран
Кил-çурт аслă — кĕтсе илме ырă
Сире, чыслă çынсем, аякран.

Кĕрĕр, тăванăмсем,
Иртĕр, туссем,—
Чĕнтĕм салхуран мар, савнăран.

Çирĕклĕхре касрăм шурă çирĕк,
Хăма çурса турăм шур сĕтел.
Çитмĕл тирĕк лартма çийĕ ирĕк,
Пыллă сăра пулĕ ман сĕтев.

Иртĕр, тăванăмсем,
Ларăр, туссем,
Варлă пурăннине мĕн çитет.

Юманлăхри юман — вулли тӳрĕ —
Урай валли пулчĕ питĕ шеп.
Çакă аслă çурта килсех çӳрĕр:
Кăмăларсем ăшши килĕшет.



М 18516-4473
Чувашская республиканская
библиотека
им М. Горького

Юрлăр, тăванăмсем,
Ташлăр, туссем,—
Савăнмасан тунсăх ермешет.

* * *

Çуркуннехи хир — сăпкари пепке,
Çуллахи — çураçнă хĕр-пике.
Кĕркуннехи хир — таравят анне,
Хĕллехи — шур çӳçлĕ асанне.

* * *

Аслати... Епле тискер хăват!—
шухăшланă çын сĕм авалтан.
Çунтарать, хуçать, çурать, ватать!
Пур енчен пĕр харăс авăтать.
Çĕнĕ çăлтăрсем çутатпăр халь
вĕçсĕр-хĕрсĕр уçлăх хирĕнче.
Аслати çинчен, çавна кура,
çĕн юмах ярççĕ çĕр çинче.

Чăннипе таçта — çут тĕнчере —
Улăп-тимĕрçĕ ĕçлет иккен:
Çавракa Хĕвел-кăмакине
чи малтан вĕрсе чĕртет иккен,
Вучахра çĕкленнĕ тĕтĕмне
саппунпа сĕлтсе сирет иккен,
Титанне, вут-çулăм сирпĕтсе,
Çĕр-сунтал çинче туптать иккен,
Нимĕнрен те çирĕп пул тесе,
шыв сапа-сапа хĕртет иккен —
Çăлтăрсем патне вĕçсе кайма
тимĕрçĕ карап тăвать иккен.

* * *

Хĕвел хӑй куранмасть: пĕлĕтсемпе хупланнӑ.
Те тухӑç ку, те анӑç? Те ир, те каç пултти?
Тавралӑх чĕрĕлĕх тĕсĕсемпе сӑрланнӑ.
Тĕссем çинче лак пек сӳнмен хĕвел çути.
Хĕрелнĕ пĕлĕтсен çӳл хĕррисем, тĕрленĕн.
Шыв хĕрринчи йăмра тăрри çĕн хушпу пек.
Шыв урлӑ — йĕс кĕпер. Хĕвел çулне йĕрленĕн,
Ун тăрăх çил чупать ик юхăм хушшипе...
Хĕвел тин çех кунта пулни темре те паллӑ:
Хум шывĕ лекнĕ чул пăс кăларсах типет;
Ыраш пусси ăшне пытаннӑ çул тусанлӑ,
Тусанлӑ та вĕри — ура тĕпне хĕртет;
Сĕтек тулман пучах пуçне салхуллăн уснӑ;
Куç шăрçи пек кăвак çеçке, чăмăртанса,
Сар шăркапа хупланнӑ та кăшт кушнӑ;
Шаланкӑ макăрса вĕçет, лармасть анса.
...Часах тĕссем, сӳнсе, çухалчĕç — каç сывхарчĕ.
Тӳпе хуралнăçем сулхăнланать хирте.
Анчах тасста, темре хĕвел хĕмне хăварчĕ —
Ĕмĕрлĕхре-ши? Е чĕрĕлĕхре — пирте?

* * *

Юман... Тĕреклĕ те лаштра, патвар та çирĕп йывăç.
Çĕмел çĕкленĕ вăкăр пек ларать вăл çил çинче.
...Хăш чух халапçă сăмахне, тен, ĕненме те йывăр,
Анчах çакна час-час эп илтнĕ ватӑ çынсенчен:

Пулать-и пурнăçра пехет, çитет-и паллӑ тапхăр
Е улшăнать-и самана,— инкеке мар — ырра,—
Юман тымар сĕтекĕпе çавна сисет те, ахăр,
Пĕр ăшă ир юмахри пек çеçке çурать вара...

Çеçки чăлт-шурă та сайра, юр пĕрчи пек чечен-мĕн.
Курман... Анчах, те пурнăçĕ майлашнине пула,
Кашни юман çине пăхса,— епле ырра ĕненмĕн! —
Шур çеçкесем шыратăп эп, кĕрсен вăрманалла.

* * *

Вут çунать, хĕм тустарса çунать,
Кăларать вут хĕп-хĕрлĕ çунат.
Те вута хĕрӳлĕх çитеймест —
Çĕр çинчех сӳнет вăл, вĕçеймест.
Çĕкленет çунат, карт туртăнать,
Хĕмленет те тертлĕн усăнать,
Çуралать çĕнни ун вырăнне,
Çулăмне чĕртсе кăварăнне.

Вут çунать, хĕм тустарса çунать,
Кăларать вут хĕп-хĕрлĕ çунат.
Хĕрлĕ çулăм, хĕрлĕ кĕл пулса,
Хăвалать йӳç тĕтĕмпе пăса.
Тăрнасем ташлаççĕ вут çинче —
Хĕрлĕ тĕклĕ хĕрлĕ тăрнасем.
...Тĕтĕм тĕслĕ пĕлĕт уççинче —
Нихăçан сӳнми шĕл-кăварсем.

* * *

Çурхи уйра хĕрӳ ĕçсем пуçланнăн,
Курса эп, пĕчĕкскер, ыйăннине:
«Ак çак йăран вĕçне тухсан, кăшт канăн»,—
Мана эс йăпататтăнччĕ, анне.

Анчах та шутсăр вăрăмччĕ йăранĕ...
Типсе-çунса çитсен, халтан кайсан:
«Хăçан,— санран ыйтаттăм эп,— ыран-и
Вĕçне çитетпĕр?..» Пулнă çав айван!..

Çур ĕмĕре ак пуранса irrтертĕм.
Хĕвел утать умра — çав йăранрах.
Ĕç ăннăçем ӳсет пулин те тертĕм
Халь: «Пул, йăранăм,— тетĕп,— вăрăмрах».

* * *

Çĕр çынни... Епле пĕлсе, йăвашшăн
Вăл çĕре хĕвел пĕрчи акать!
Çавăнпа пуль çăкăрĕ чăвашăн
Хĕвелпе Çĕр евĕр çаврака.

* * *

**ИНКЕ**

Экспресс-автобус, Канашран йăраланса тухса,
Васкарĕ Шупашкаралла, хăйле юрла-юрла.
Умра ларакансем çине пыратăп эп пăхса —
Пĕлес килет: кампа паян эп тухнă-ши çула.
Малта чĕвĕлтетет ача арçын арки çинче,
Хĕрарăмĕ, ывăннăскер, тӳлеккĕн тĕлĕрет.
Мучи чĕрес тытса ларать, те пыл ун ăшĕнче:
Мучи тавра, йăлтăртатса, сăпса вĕçсе çӳрет.
Пĕр чиперкке журнал вулать пит тимлĕн, пикенсе,
Хутран-ситрен вăтанчăклăн куçне шăлса илет.
Ун çумĕнче портфеллĕ çын ларать пуçне сĕнксе.
Ман кӳршĕ тарăхса кайсах транзисторне силлет...
Шăхасанта, лăпписене аран йăтса кĕрсе,
Сăмахсăр-мĕнсĕр пĕр инке вырнаçрĕ ман ума.
Çул çинчи çын ĕçне-хĕлне васкавлăн пĕтерсе,
Аллисене арки çине вырттарчĕ вăй пухма.
Те кушăрканă ӳт çинче хивре йĕрсем пуртан,
Умра эп куртăм уй-хире, çĕртме кассисене...

Ачашлăхпа тӳсĕмлĕхрен, çĕртен, ӳтпе вутран
Йăваласа туман-ши, тетĕп, çак алăсене...
Анчах, йăл кулчĕ те хĕвел шур пĕлĕт айĕнчен,
Эп хаваслантăм, çутăри улшăнăва курса:
Ик алă мар, ик сар хĕвел ик çанă ăшĕнчен
Тухать пек, пайăркисене саппун çине сарса...

Автобусра — улма шăрши. Транзистор нăйкăшать.
Пĕр пăхаттир, çилхеллĕскер, гитара ĕнерет.
Ача арçын арки çинче чарусăр айкашать.
Экспресс моторĕ те çаплах пĕр юрă ĕнĕрлет.
Инке куçне хупса ларать. Вăл путнă шухăша.
Тен, иртнине аса илет çак меллĕ самантра.
Тав туйăмĕ хускатнă хум капланчĕ ман ăша
Инкен хĕвел аллисене сăнанă вăхăтра.
Вара, сăлтавĕ пулнă пек, васкавлăн пĕшкĕнсе,
Кăшт сĕртĕнтĕм тута вĕçпе хĕвел пайăркине...
— Эй, шăллăм, чар-ха лашуна! Анасчĕ ман,— тесе
Хĕрарăм тухрĕ алăкран... пĕччен... уйваррине.
— Инке, улму юлать! Инке! Тархасшăн, ан кӳрен!—
Эп кăшкăрашрăм, хама хам ăшра вăрçса илсе...
— Сана вăл, ывăлăм. Илсем. Сире вăл... Чĕререн,—
Йăл кулчĕ кăмăллăн инке, аллипеле сĕлтсе...

Экспресс васкарĕ малалла... Çынсем, улма çисе,
Мухтарĕç тарават инкен ĕçне, чун-чĕрине.
Инке хăй юлчĕ, майĕпен, хуллен пĕчĕкленсе,
Хальччен курман çĕн палăк пек, сенкер çул хĕррине.

* * *

Кивĕ уйăх, çĕнĕ уйăх, теççĕ...
Çын чунне кура пуль, тӳперен
тĕрлĕ çын куçне пĕртен-пĕр уйăх
курăнать чăнах та тĕрлĕрен.

Ылтӑн тенкӗ евӗр курӑнать вӑл
хыт кукарӑн ӗмӗтсӗр куҫне...
Ҫӑкӑр сӑмси евӗр курӑнать вӑл
выҫӑ касӑхнӑ ача куҫне...
Ӳт ҫинчи суран пек курӑнать вӑл
вӑрҫӑ вӑрҫнӑ салтаксен куҫне...
Ирӗклӗ ҫӗршывӑн гербӗ евӗр
курӑнать вӑл паттӑрсен куҫне...
Ҫӗр ҫинче паян ырламалли
е тарӑхса хурламалли ҫук мар:
пур чӑнпа суя, телей те хуйхӑ,
пур-ха вӑрҫӑ, кӗрешӳ, чукмар...
Ҫавӑнпа этем ҫӑварӗ евӗр
курӑнать пуль уйӑх ман куҫа:
хуррине вӑл тарӑхса сивлет пек,
ыррине мухтать пек йӑл кулса.

* * *

*Арсентий Андреева асӑнса.*

Новгородри вече чанӗ пек
Янраса иртсе каять те пуйӑс,
Темӗнле хӑватлӑ чӗнӳпе
Чун-чӗре тулать — асаплӑ туйӑм!..
Пыр типет, ҫанҫурӑм ҫӳҫенет,
Кӑмӑла ҫӗклет пӑлхавлӑ кӗвӗ,
Тунсӑх илӗртет тӗнче ҫине,
Чуптӑвать куҫран, пике пек, евӗк...

Пуйӑсӗваскать малтан мала.
Кӑшкӑртса ҫула чӗнет: «Ан юлӑр!»
Манӑн та ҫула, тен, тухмалла?
Тухмалла! Апла — туссем, ал сулӑр!

— Урхамахăм, сар çунаттуна —
Вĕçсе кай васкавлă пуйăс хыççăн.
Тен, хуса çитме пулать ăна...
Кăшкăртни те илтĕнет-ха уççăн.

...Вĕриленнĕ хурçă рельсăсем
Юн тымарĕ евĕр кăлт-кăлт тапнăн,
Ман пата таçтан... лерен, сисеп,
Тахăшĕ çак чĕнĕве ăсатнă.

## ХУСАНКАЙ ТУПĂКĔ УМĔНЧЕ

...Чăрăш лăссисем ем-ешĕл, нӳрлĕ.
Ĕсĕклет, çын пек, салхуллă марш.
Чĕрене пăвса хытарăп ӳлĕм,
Халь куççулĕме пытарас мар.
Тупăкра поэт... Вĕçленнĕ юрă...
Вĕçсе кайнă тĕнчене сасси...
Сивĕннĕ çамки юртан та шурă.
Çухалман вилсессĕн те маси.
Мĕн тери асаплăн сӳннĕ халĕ
Пурнăç юрăçин! Çын çех курман...
Пĕр каçра хура кăтра сухалĕ
Ĕлкĕрнĕ тĕпрен кăвакарма.
Улăштарайман тискер чир-йĕрĕх
Музăсем юратнă çут пите.
Шăп тути тавра çех тарăн йĕрĕ —
Пурнăç пуснă юлашки пичет.
...Кам ăна тахçан «сив чунлă» тенĕ,
Амантса ун çепĕç чĕрине?!
Пурпĕрех поэт ырра ĕненнĕ —
Пат татман ĕнернĕ хĕлĕхне.

Пĕлнĕ вăл: çу варринчех çил-тăвăл
Амантать хăш чух чĕр йывăçа.
Çырнă вăл çаплах чĕнӳллĕ сăвă
Куççульне пухмасăр ывăça...
— Çывăр канлĕн, аслă чунлă улăп,
Вут-кăвар чĕреллĕ ырă çын —
Юрату, Тăванлăх, Танлăх, Туслăх,
Ирĕклĕхпе Чăнлăх юрăçи.
Халăху канма пĕлмесĕр утнăн
Ĕмĕт çулĕпе инçе-инçе,
Çăлтăру сан сӳнмĕ — çунĕ çуттăн
Ĕмĕрхи поэзи тӳпинче.

* * *

Кĕр çитрĕ.
Тĕссĕрленнĕ тӳпере
Кăринклетеççĕ тăрнасем салхуллăн.
Вар тĕпнелле шăвать кăвак тĕтре.
Каю çинчи укаллă сывлăм çуллă
Тумлисене тăкма шеллет çĕре.
Çăпатине йĕпетес мар тесе,
Кив прачакпа утать пĕр ват сунарçă.
Ĕшеннĕрен сывлать хăй пехлесе.
Анчах куç шăрçисем сӳнмен — çунаççĕ,
Тен,
Юлашки ăнăçлăха кĕтсе.
Сасартăк çывăхри туйралăхра
Ĕрле пуçларĕ йытă:
«Тупрăм!
Акă!»
Мĕлтлетрĕ çулăм тĕксĕм уçлăхра —
Чĕтрерĕ алă...
Чим,
Мучи,
Ан макăр:
Кун пек час-час пулать вăл пурнăçра.

* * *

Шап-шур чарлан — кĕсмен çунатлă кайăк,
Хум кĕмĕлне чăрт сирпĕтсе илсе,
Тӳпенелле вĕçет. Пĕр пĕчĕк айăп
Тупаймăн эс унра: епле пĕлсе
Ăна вĕçевшĕн тунă çутçанталăк.

Анчах паян çакна пĕлесчĕ манăн:
Мĕн-ма çак шур çунатлă илеме,
Вăл Ĕмĕт-кайăк пулнине курманнăн,
Çиллессĕн, сиввĕн «шыв йытти» теме
Тахçан, авал, пултарнă манăн халăх?

* * *

Сăна-ха çил хускатнă тинĕсе —
Темле хăрушă шухăш пур унта:
Хиврe хумсем иртеççĕ чӳхенсе —
Пĕр пĕчĕк тĕк юлать пĕр выранта...

Хăватлă тинĕс вăйсăрлăхĕнчен
Кулмастăп эп: тен, уншăн ку — шăпа?
Тек тĕлĕнместĕп вăл сарлакинчен:
Тулли пулас вăл юхăмсăр шывпа...

Сасартăк, хĕрлĕ çулăм пек, умран
Çунатлă яхтăсем вĕçсе иртсен,
Куратăп эп: пулать иртме хумран...
Çил парăса лăска-лăска вĕрсен.

* * *

Хупах е вĕлтĕрен хуплaнă тарăн варсăр,
Çăлкуç йĕри-тавра ши кайнă вак хăвасăр
Саркайăк ĕнермест те кĕслине.

Çунат çупса вĕçме — çурхи ăшша кĕмесĕр,
Çемçе йăва тума — тип курăклă тĕмесĕр
Тăри те хускатмасть йĕс чĕлхине.

Чăваш сăпка çинчен ансан пуçлать те юрă
Мĕн виличчен юрлать—хĕлле-и, кĕр-и, çур-и,
Килте е хăнара, туйра, хĕрӳ ĕçре...
Юрри-ун вĕçленмест, кĕрсен те хăй çĕре.

Саватăп чăваша эп кăмăлĕ уççишĕн,
Тиркевсĕр чĕрипе хавасланма пĕлнишĕн...
Унпа пĕрле паян юрлатăп савăнса,
Чуна чĕм кӳртекен чĕлхишĕн тав туса.

* * *

«Чăваш вилет те — чăвашсем
вилмеççĕ»
*Халăх сăмахĕ*

— Ăçта вилеççĕ чăвашсем? —
эп ыйтрăм ватă пулăçран.
Вăл, çамкине пĕркелесе:
«Курман эп,— терĕ.— Çук. Курман.
Тен, çавăнпах пуль, кăйкăр пек,
эп çивĕч куçлă, суккăр мар.
Ыйтса пăхсам çав йывăçран:
Вăл çĕр çулта, çапах — хăрман».

— Ăçта вилеççĕ чăвашсем? —
эп ыйтрăм ешĕл чăрăшран.
Каларĕ вăл чĕриклетсе:
«Çав инкеке курман вара.
Курнах пулсассăн, лăссăмсем
сип-симĕс пулмĕччĕç вăрах.
Ыйтса пăхсам кăвак хумран:
Манран чылай вăл аслăрах».

— Ăçта вилеççĕ чăвашсем? —
эп ыйтрăм Атăл хумĕнчен.
Каларĕ вăл пăшăлтатса:
«Курман. Юхатăп ĕмĕртен.
Курнах пулсассăн, пăс пулса,
вĕçсе çĕкленĕттĕм çĕртен...
Ыйтса пăхсам пĕлĕтсенчен:
Вĕсем кураççĕ йăлт çӳлтен».

— Ăçта вилеççĕ чăвашсем? —
эп ыйтрăм чĕмсĕр пĕлĕтрен.
Вăл аслатиллĕ сасăпа:
«Курман эп,— терĕ.— Ма суяс?
Курнах пулсан, куççуль пулса,
юхса çунтарăттăм уя.
Ыйтса пăхсам эс хĕвелтен
Çанталăк тăнă чух уяр».

— Ăçта вилеççĕ чăвашсем? —
вара эп ыйтрăм хĕвелтен.
«Курман хальччен эп,— терĕ вăл, пит ăшшăн,
анне пек, кулса.
— Курнах пулсан, пĕр самантрах
эп кайнă пулăттăм çунса.
Ыйтса пăхсам çав пулăçран:
Вăл ватăлнă тем те курса...»

* * *

Кĕрхи пĕрремĕш сивĕсем
Кĕтмен çĕртен килсе çитсессĕн,
Çакна сăнатăн тĕлĕнсе,
Ирех уя тухсассăн, эсĕ:

Тăм ӳкнĕ; шурă çул хĕрри;
Анчах шăнман, сип-симĕс уçăм;
Кăшт леререх — вăрман тĕрри:
Турат çинчех-ха çулăм-çулçă...
Мĕн пур-ши уçă сывлăшра?
Вăл, сиплĕхлĕ пулин те, темшĕн
Салхулăх çуратать ăшра,
Чăнах сиенлĕ пек этемшĕн.
...Кивви — каять, çĕнни — килет.
Эс иккĕшне те пуç таятăн.
Çав самантра чĕрӳпеле
Хальччен туйман сивве туятăн.

* * *

Ейӳ чакса çитсен, шыв тăрăлсан,
Тин кушнă юшкăн кĕрчĕсем çинче
Сип-симĕс вĕтĕ-шакă чул тупсан,
Вăрттăнлăхпа тулатчĕ çут тĕнче:

Ман шухăшпа, такам çĕр ăшĕнчен
Тĕлĕнмелле парне ярса парса,
Çапла астутаратчĕ хăй çинчен,
Ырра асамçă евĕр шантарса...

Çавна чунтан-вартан ĕненнĕрен
Анне пуçелĕкне, минтер айне,
Чиксе хураттăм эпĕ каçсерен
Пĕр-иккĕшне: ыр тĕлĕк кур, анне...

...Мĕн курăп-ши эп кĕçĕр тĕлĕкре?
Ларатăп тĕлĕнсе: мĕн чул вĕсем! —
Выртаççĕ шăкăрин пуçелĕкре
Ачалăхăн сип-симĕс чулĕсем...

## АСРАН КАЙМИ
## АКИ-СУХИ

Çĕн кун акни шăтма вăхăт çитсен...
*Çеçпĕл Мишши*

ПОЭМА

I

Çитĕ!
Чăтаймастăп эп текех
Тертлĕ тунсăха —
Тухас çула.
Парашютсăр вĕçеври пекех
Çĕр туртать мана —
Сыв пул,
Хула.

Çуркунне...
Часах тăван ялта
Çураки пуçланĕ кĕрлесе...
Хăвăртрах вĕçсе çитес унта,
«Нимене килетĕп-ха», тесе.

— Халăх,
Йышăн Çеçпĕл шăллĕне
Хăвăн аслă çураки йышне:
Вăл манман сăваплă çĕр ĕçне,
Коммунист поэтăн канашне.

II

Каç çывхарнă чух,
Шăп ĕнтрĕкре,

Тухрăм эпĕ пăчă вакунран.
Уçă
Çĕр шăршиллĕ ирĕкре —
Мунча хыççăн ĕçнĕ пек уйран.

Çутă питлĕ пушмака хывса,
Утрăм çаруран çул хĕррипе.
Кунта ӳснĕ сăвăçа савса,
Саламларĕ шăпчăк юррипе.

Пиçнĕ çĕрен сиплĕ нӳррине
Туйса илтĕм те ӳт-тирĕмпе
Ӳсĕрĕлтĕм, çимĕк сăрине
Ĕçнĕн илемпи алтăрĕпе.

Вăрманта —
Çурхи туйсен сасси,
Сертепе кăтра кăмпа шăрши.
Питĕмрен,
Хускалнăн çил касси,
Ачашлать тăван кĕтес ăшши...

III

Тухнă май вăрман хĕрне
Умра
Куртăм тăван ял çутисене.
— Савнă Хура Шыв *,
Салам манран!
Ир çутатăн çăлтăрусене.
Çутă тăрăх тупрăм шыраса
Колхозри культура керменне.
Те унта çуху пырать...
Кайса

* Хура Шыв — ял ячĕ.

Курайманрăм — çитрĕм çĕр енне.
Çураки пуçланайман.
Аван!
килтĕм питĕ вăхăтлă яла.
Кĕтĕм те ана çине çарран
Илтĕм кăпăшка çĕре алла.

Тĕпренет,
Кĕрпеклĕскер,
Тăпри.
Техĕмлĕ сĕтек тухать,
Юрсан:
Çĕр поэчĕ Ухсайла юри
Тĕрĕслерĕм,
Шăл çине хурса...
Ял хĕрне çитсен,
Учўк* шывне
Ĕçрĕм тăнлавсем пăрланиччен.
Шăнкăр-шăнкăр юхăм юррине
Юратса итлерĕм эп темччен.
Ларăттăм кунта эп çĕрĕпе —
Тăвансем кĕтеççĕ хăнана.
...Чаплă академи хорĕпе
Кĕтсе илчĕç автансем мана.

IV

Ирхине çав хорăн сассинче
Çукчĕ иртнĕ каç янранă бас —
Нинук кинĕн пăссăр яшкинче
Ват автан тукмакĕччĕ пулас...
Шăллăмпа, вĕри шўрпе
Тата
Сăрине пĕрер курка сыпса,

* Учўк — çăл ячĕ.

Утрӑмӑр ял хӗрнелле,
Унта
Тракторсем —
Кӑларас ҫук суса!
Ырлӑх-сывлӑх,
Кӑпӑш ҫӗр сунса,
Тӑван ялӑн паттӑрӗсене,
Ыйтрӑм вӗсенчен эп,
Шӳт туса:
— Тек кӳлместӗр-и ӗнӗрсене?
— Калаҫан!
Тӳшек сарса пама
Хатӗр ӗнене халь ял ҫынни.
Трактор пур ака-суха тума —
Ҫулсерен килсе тӑрать ҫӗнни,—
Терӗ моторсем тапраннӑ май
Паллӑ бригадир Фомин Илле.
— Техника колхозсенче нумай —
Парада тухма та ҫитмелле!

## V

Чӑн та,
Хӗрлӗ площадьри пекех,—
Пӗлмесен,
Парад ку темелле,—
Умлӑн-хыҫлӑн,
Пайланса икке,
Хурҫӑ ҫар васкарӗ хирелле.

Сехетрен,
Пир кумнӑ пек,
Ана
Майӗпен пуҫланчӗ хуралма.
Тракторсем,

Хумхантарса чуна,
Харăссăн пикенчĕç юрлама...
Эпĕ,
Тимĕр ларкăчă çинче
Сăнаса пырса çĕр юхнине,
Мирлĕ кунăн мирлĕ ĕçĕнче
Аса илтĕм вăрçă çулхине.

## VI

...Пиллĕкмĕш сехет пырать пуху.
Тен,
Ирччен те пырĕ,
Кам пĕлет.
Тĕтĕм тулнă тĕттĕм зал салху —
Ик амаллă вĕлле пек сĕрлет.

— Çук,
Кўлместĕп пурпĕр ĕнене.
Харкашни-вăрçни те кăлăха!—
Кăшкăрать çиллессĕн Кулине.
— Намăс кăтартмастăп хам йăха!..

— Пăруларĕ,
Юлкалать уйран —
Ачасем тек вилмĕç выçăпа,—
Калаçать Настаç аппа.
— Ыран
Акана тухас пулать çапах.

— Пăлтăр çийĕ-çĕрĕк улăмпа
Хĕл каçартăм эпĕ Мăклана.
Акана епле тухас унпа? —
Макăрать салтак матки Анна.

— Тухнă пулăттăм хире тем пек
Хамăн Манюка эп çаватса —

Ирсерен ăна кӳршĕсемпе
Тăрататпăр,
Вĕренпе йăтса,—
Терĕ тăлăх арăм Пăлаки,
Хурлăхлăн пăхса ялйыш çине.
— Çитрĕ мар-и вăхăчĕ акин —
Ăш вăркать,
Курсан çĕр кушнине...

— Хамăр кӳлĕнер пуль!
— Сăхăм мар!
— Эп тухатăп.
— Хĕсĕр те ĕнӳ.
— Эс ху... хĕсĕр.
— Сӳтĕк!
— Ан хăмсар!
— Еркĕнне кӳл...
— Ухмахла сĕнӳ...

— Саботаж-и ку?! —
Çухăрашать
Колхоза канаш пама яни.
Кăлăхах çапла вăл «тăрăшать» —
Пулăшмасть ун пек «канаш пани»...
Шыв сапса вĕри чулсем çине,
Йӳçĕ ăшшине çех ӳстерет...
Илемсĕрлетсе питне-куçне,
Пĕр хĕрарăм уласа йĕрет...

## VII

Председатель Альтютти инкен
Куçĕнче — пăшăрхану,
Асап:
«Мĕн тăвас?
Хальччен курман инкек

Çитĕ,
Вăхăтра акаймасан...
Тархаслас,
Хистес,
Анчах залра
Тăвăл çĕкленет,
Сăмах чĕнсен:
Питĕ тертлĕ пурнăçĕ тылра —
Кўтсе çитнĕ чунĕсем çынсен.
Иртнĕ эрнере ик-виç юпа
Хутшăнчĕ татах масар çине:
Ачасем вилеççĕ выçăпа
Е çисе «мăян кулаччине»...
Мĕн тăвас?
Камран канаш ыйтас?
Бюрора та юлтăм пĕр-пĕччен...
Райкома ирех тухса утас,
Ĕç майлашмасан кунта ирччен.
Эх,
Ялйыш,
Ялйыш!
Ыр ĕçўпе
Тĕлĕнтернĕ эс хальччен пире.
Халь — хурлантаран хирĕçўпе,
Ним сăлтавсăрах кĕрен чĕрре.
Чи хĕрўллĕ тархаслу,
Чĕнў
Ирĕлтерейместчĕрўн пăрне...
Саншăн чи хакли апла ĕнў?
Сăртăр тилпĕрен колхоз хирне?
Тĕрĕс мар ку,
Тĕрĕс мар йăлтах!
Эп пĕлетĕп ял çыннин чунне:
Тиенни пушантăр-ха кăштах —
Хăй çĕртен вăтанĕ ун чухне.
Çĕр вăл тарават та — кăмăлне

Çавăрмасть çулталăк иртиччен...
Тен,
Ялйыш,
Эс маннă тивĕçне?
Е чысу сан çăкăр пĕтиччен?
Кăшкăрса йĕрсе ярас килет:
Çук!
Пулмастăп пуçлăх эп текех!
Юрамасть —
Çакна инке пĕлет:
Председатель командир пекех.
Шаннăран пуль йывăр вăхăтра
Парти мана хушрĕ çак ĕçе.
Эпĕ — большевик.
Çĕршыв — вутра...
Ырату ан çĕнтĕр тивĕçе.
Питĕ кирлĕ çăкăр çĕршыва —
Кирлĕ ирсĕр фашиста çĕнме!
...Тул та çутăлать ав.
Мĕн тăвас?
Ӳкĕтлес — хал çук сăмах чĕнме...»

## VIII

Шăп çак самантра кĕтмен çĕртен
Кĕрр! кĕрлерĕ зал çил-тăвăлла:
Ленин тухрĕ сцена хыçĕнчен!
Чĕрĕ Ленин!..
Тупата вăлах!

Мĕн ку?
Ырă тĕлĕк?
Куç уçах...
Тен... кино куратăп?
Çук экран.
Аташатăп пуль — çимен,

Выҫах...
Ыттисем те тӗлӗннӗ,
Куран,—
Сӳнчӗ йӳҫӗ тӗтӗмлӗ вучах...

Чӑн та,
Самантра куҫ умӗнче
Сӑнӗсем йӑлт улшӑнчӗҫ ҫынсен:
Вӑранать ҫапла ирпе тӗнче,
Тӗттӗме хӗвел ҫути ҫӗнсен.

— Тӗлӗнтермӗш! —
Терӗ Элтиван.
— Макӑртӑм,
Илтсен вӑл вилнине.
Чӗп-чӗрех иккен!
Ку — пит аван.
Унпала ҫӗнетпӗр нушине!

— Тӗрӗс,
Элтиван,—
Ват Крахвине
Сасӑ пачӗ шӑппӑн хыҫалтан...

Ленин залтине,
Вӑл чӗррине
Ӗненет ялйыш чунтан-вартан:
Умӗнчи Тунна инке хысҫне
Вӑтанса пытаннӑ Кулине,
Васкаса шӑлать Анна куҫне,
Куртӑм Пӑлаки йӑл кулнине...

IX

...Эп малтан ача ӑстӑнӗпе
Ӑнланман ҫынсен ӗненӗвне:

Пĕлнĕ — Ленин вилнĕ чăннипе,
Мускавра упраççĕ ун ӳтне.

Чĕрĕлмест этем, пĕрре вилсен,—
Хам куçпа хам курнă эп çакна:
Тек «мемме» ыйтмасть Начук,
Йĕрсе,—
Витрĕç юрлă тăпрапа ăна...

Чĕрĕлмеççĕ вилнисем...
Анчах
Мĕншĕн,
Мĕншĕн эпĕ çийĕнчех
Манса кайрăм-ши çакна пачах?
Чĕрĕ Ленин куçăм умĕнче...

## X

...Улттăмĕш сехет пырать пуху.
Тен,
Ирччен те пырĕ,
Кам пĕлет.
Халăх,
Тăвăл хыççăн сӳннĕн хум,
Ленин сăмахне кĕтсе,
Сĕрлет.

Ленин,
Малалла утса иртсе,
Алă пачĕ председателе,
Тем каларĕ те,
Пуçне пĕксе,
Çывăхарчĕ сцена хĕрнелле.
Савăнтарчĕ питĕ çак мана:
Йăвашланчĕ халăх,
Вăл кĕрсен.

Кăмăлларăм эпĕ те ăна,
Куçĕ ăшшăн йăлкăшса илсен.
Йĕтем пек çамки таса,
Кукша —
Чăн та,
Кĕнеке çинчи сăнах...
— Юлташсем!
Тылри тăшман — нуша,—
Хамăрла
Пуçларĕ вăл сăмах.
Йывăр,
Шутсăр йывăр халь сире:
Тракторсем çук,
Лашăрсем сахал...
Пурпĕр акалас пулать çĕре:
Çураки — акаçă фрончĕ халь.
Вăрçă хирĕ анăçра,
Инçе —
Одер урлă каçрĕ Хĕрлĕ Çар.
Пулăшар ăна — тухар ĕçе,
Тивĕçе манса тавлашар мар.
Вăрçăра салтак юн тăкнă чух
Тар тăкар кунти хĕрӳ ĕçре.
Харкашма халь пирĕн вăхăт çук:
Пиçсе çитнĕ çĕр кĕтет пире.
Питĕ кирлĕ тырă çĕршыва,
Çăкăр кирлĕ фашиста çĕнме.
Йывăр...
Анланатăп.
Мĕн тăвас?
Йывăртан эп килтĕм те чĕнме.
Йывăртан...
Тата совет çынни
Улăп пек хастаррине пĕлсе,
Çак асаплă çулсенче çунни
Хевтĕре чакарнине пĕлсе...

Юлташсем,
Çĕршыв шанать сире:
Чи таса тĕллев лартса ума,
Тухăр пĕр пулса тăван хире
Çĕнтерӳ аки-сухи тума.

XI

— Çĕнтересчĕ эсреле часрах!
— Пуçхĕрлĕ çакасчĕ Гитлере!
— Кăмăрчакĕ унăн пит патрак...
— Раççее çĕнесшĕн,
Чĕмере!
— Нихăçан та,
Хамăр кӳлĕнсе
Сухапуç туртсан та,
Пурпĕрех
Çичĕ ют умне чĕркуçленсе
Лармăпăр!
Çĕнме — çĕнетпĕрех! —
Евитлерĕ Пăлаки аппа,
Тупа тунă пек,
Хавхаланса.
Çавăнтах хăй,
Кĕнĕн айăпа,
Пике пек хĕрелчĕ,
Вăтанса...
— Çĕнтерӳ аки-сухи апла?
— Тухăпăр.
— Ильич чĕнет пире...
— Халиччен чĕркуçленмен...
— Çапла.
— Хамăр çын.
— Тĕллевĕ вăл — пĕрре!..

Ленин,
Кĕсйинчен хут кăларса,

Тем вуларĕ,
Путрĕ шухăша...

Элтиван мучи,
Çавна курса:
— Ку... Микуç пуль? —
Терĕ.
— Тамаша!..
— Эх,
Айван Йăван! —
Настаç аппа
Пит ӳпкевлĕн пăхрĕ ун çине.
— Куçупа сăна — кур чунупа...
Уç-ха,
Мăкăрти,
Чӳречине.

Нӳрĕ çил,
Вĕçсе кĕрсе зала,
Ӳкрĕ урайне çăтăлтатса.
Вăратасшăн автансем яла
Вăйсăррăн,
Салхуллăн авăтса.
Кашкăр хорĕ выçлăх юррине
Çитмĕл çичĕ сасăпа юрлать.
Кăшласа тӳпе кукарккине,
Каç тасçта тарать —
Тул çутăлать...

## XII

Ленин вальт çĕклерĕ те пуçне —
Эп çакна сăнарăм тĕлĕнсе:
Те çутатрĕ шуçăм ун куçне —
Кăварла вăл илчĕ хĕмленсе.
— Юлташсем! —

Хĕрӳленсе кайса,
Малалла вăл тăсрĕ сăмахне.
— Тав тăватăп,
Пуҫăма тайса,
Эп Тăван ҫĕршывăн халăхне.
Тем те курнă-тӳснĕ вăл —
Чунне
Сивĕнме,
Типсе хăрма паман.
Ҫавăнпах та пуль Ҫĕршыв-анне
Ҫичĕ ют кулли хальччен пулман.
Пулмĕ те!
Часах хăмач ялав
Пуҫлĕ вĕлкĕшме рейхстаг ҫинче.
...Вăрҫă хыҫҫăн улшăнĕ тĕнче.
Пулăшăпăр вăй илме яла.
Вăхăт ҫитĕ — тепĕр ĕмĕре
Аслă тĕллевсем лартса ума,
Тухăпăр ҫĕнелнĕ уй-хире
Коммунизм аки-сухи тума!

## XIII

Халăх вырăнтан хускаличчен
Ленин тухрĕ сцена хыҫнелле...
Шăпăрт лартăмăр эпир темччен:
Вăл пире куҫ пăврĕ темелле...

Мĕн ку?
Ырă тĕлĕк?
Куҫ уҫах...
Тен,
Кино куратăп?
Ҫук экран.
Аташатăп пуль —
Ҫимен,

Выҫах...
Ыттисем те тĕлĕннĕ,
Куран,—
Пурте путнă тарăн шухăша...

Шухăшлатăп эп те ăшăмра:
Вилнĕ Ленин чĕрĕлчĕ умрах...
Ҫак тĕлĕнмелле улшăнура
Темĕнле асамлă вăй пурах.
Мĕнлескер вăл?
Мĕн пирки ҫынна
Тыткăна илет,
Ĕнентерет,
Кăмăла уҫать,
Ҫĕклентерет,
Пăхăнмасăр тăрă ăстăна?

## XIV

...Ленин манăҫмарĕ.
Ҫав каҫран
Кĕчĕ те вырнаҫрĕ чĕрене.
Ăстăнпа ăнлантăм эп кайран
Мĕншĕн Ленин маншăн чĕррине.
Каярах,
Ҫĕр чăмăрĕн пульсне
Комсомолец чĕрипе туйсан,
Каярах,
Коммуна никĕсне
Халăхпа пĕрле хывма тухсан,
Питĕ уҫҫăн куртăм эп ҫакна:
Сывлăш евĕр кирлĕ вăл ҫынна.

Ун хăватлă шухăшĕн ҫути
Ăстăна хĕвелĕн ҫутатсан,
Саншăн сарăлать кунҫул карти,

Ҫӑнлӑха савма пуҫлан тасан.
Ирӗклӗ ҫӗршывӑн шӑпине
Хӑвӑн шӑпупа ҫыхӑнтаран,
Ху юратнӑ Ленинӑн сӑнне
Чӗрӗ чух тӗл пулнӑ пек куран.
Ҫӗр ҫинчи хаяр кӗрешӳре,
Пӗтӗм тӗнчери ҫӗнелӳре,
Хамӑр тӑвакан ҫӗнтерӳре
Ленин чӗррӗн курӑнать пире.
Ӗмӗрсем чыс тӑвӗҫ малашне
Унӑн ӳсекен пӗлтерӗшне:
Пулӗ вӑл тата та аслӑрах,
Аслӑрах,
Ҫынсемшӗн хаклӑрах.

## XV

Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫкаласа
Халӑх тухрӗ уҫӑ сывлӑша.
— Ӗлкӗрӗпӗр-ши кӑҫал акса,
Кайрӗ ав ҫанталӑкӗ ӑшша,—
Терӗ Элтиван мучи салхун,
Ҫиҫӗм сирпӗтсе чакмипеле.
— Ҫӗр хӑпарчӗ.
Иртӗ ик-виҫ кун —
Кушӑхма та пуҫлӗ, темелле.
Кӑшт утсан,
Хаш сывласа илсе:
— Ле-е-ни-ин,—
Терӗ,
Сӑмахне тӑсса.
— Вӑхӑтлӑ ӑс пачӗ,
Пит пӗлсе...
Ӗненетӗп:
Пырӗ йӑлт усса.
Хамӑн ӗмӗрте эп пуҫласа

Кĕçĕр куртăм чĕрĕ Ленина.
Пулнă çав этем!
Пиртен таса...
Нихăçан та манмăп эп ăна.

Ăвă тиврĕ.
Чĕлĕмин ăшне
Пӳрнипе ăна пусса хурса,
Ăслă ватă тăсрĕ сăмахне,
Эп хăйне итленине курса.
— Талану çук темĕп тек хама —
Ĕмĕтленнине курайрĕ куç:
Пулăшрĕ мана ăна курма
Агитатор,
Большевик Микуç.
Питĕ,
Питĕ пысăк тав ăна.
Кирлĕ çын —
Ăста артист,
Талант.

Вăл чĕртсе тăратрĕ Ленина!
Сăмахне тата епле калать!
Карт,
Ачам,
Сăмсу çине çакна,
Хăлхуна çакна,
Мăнукăм,
Чик:
Ма пурте ĕненчĕç-ха ăна?
Хăй вăл сумлă çын,
Хăй — большевик.
Алăкĕ патне çитес чухне
Чĕнчĕ вăл:
— Калас пулать тӳрех:
Ырă çын,

Вилсен те,
Куç умне
Чĕр сăнпа тухать вăл пурпĕрех...

## XVI

— Ну,
Арçын,
Вăрат-ха аппуна,—
Хушрĕ,
Эп киле çитсен,
Анне.
— Кӳршĕсем ав кайрĕç акана.
Çавăтса тухар пуль ĕнене.

Вĕлтĕрен яшки сыпкаласа,
Çемйипех уттартăмăр хире.
Ĕнипе ачашшăн калаçса,
Хуса çитрĕ бригадир пире.

— Хатĕрсем,
Акапуçсем уйра.
Сухипуçĕсем те çавăнтах...
Эх,
Ик-виçĕ тракторччĕ!
Вара —
Хуйхă-суйхă чакĕччĕ кăштах,—
Терĕ бригадир ӳкĕнерех,
Шит тăршшĕ чикаркка пĕтĕрсе.
— Халь... аванччĕ виçĕ эрнере
Уй ĕçне йĕркеллĕн пĕтерсен.

Сенкерленнĕ тӳпере тăри
Çăлтăр сӳнтерет юрла-юрла.
Сывлăшра йӳçет хресчен сăри —
Кăшт йӳçенкĕ:
Пылсăр пулмалла...

Çĕклемест,
Куратăп,
Çурхи ир
Хăй илемĕпе кăмăлсене.
...Тухăç шурчĕ çитнĕ чух эпир
Кăшт пăсланакан ана хĕрне.

XVII

Асăмран кайми аки-сухи —
Ыратуллă ырлăх,
Хир савни...
Çĕр çумнех пуссассăн та хуйхи,
Симлĕ туйăм çуратать ани.
Тарĕ — йӳçĕ,
Сывлăшĕ — хĕрӳ,
Ĕçĕ — йывăр,
Кирĕкĕ — хура...
Пурпĕр хумханать,
Юрлать чĕрӳ
Çураки пуçланнă май уйра.

...Элтиван мучи,
Сухипуçне
Пит ăста,
Çип çапнă пек,
Тытса,
Хурлăхлăн пуçларĕ уй ĕçне —
Юлчĕ касă çаврăнса выртса.

Ак Микуç хускатрĕ сухине —
Тарăн,
Тӳрĕ унăн та касси.
Утнă май пуçларĕ юррине —
Çӳçентерчĕ чĕрене сасси:

«Алран кайми аки-сухи,
Асран кайми ати-ани...

Аки-сухинчен уйрăлас çук,
Ати-анине, ай, манас çук...»

— Эх,
Микуç!
Вилме выртсассăн та
Юрă пуçлăн эс,
Тăрса ларса.
Виç чĕре пуль сан кăкăрунта,—
Терĕ Пăлаки пуçне сулса.

Аçа çапнăн,
Шартлатать пушши.
Тертлĕн мĕкĕрсе илет ĕне.
Кăпăш юхăм пăсĕ —
Çĕр шăрши —
Çавăрать пуçа...
Мухтать анне:
— Тикĕсех пулать.
Сергей,
Кăнтар.
Касăран тухан,
Васçук:
Ан пус!
...Акалатпăр чăн та пит хаетар
Икĕ саккăрти арçын,
Ик тус.

Çĕр-анне инкекрине пĕлсе,
Тивĕçрен çӳлте пулайăн-и?! —
Сухалать,
Çăрха утне кӳлсе,
Колхоза канаш пама яни...

Этемми те выльăхĕпеле
Мăшăр кӳлĕмре утса çӳрет.
Икĕ ывăл ачипе пĕрле
Пăлаки аппа туртать сӳре.

Кулине те кӳлнӗ ӗнине,
Мӑйраки вӗҫӗсене касса...
...Сар хӗвелӗ йӗплӗ ҫӑмхине
Ҫӑмхалать,
Кӑнтӑралла кусса.

### XVIII

Выҫлӑхри апат...
Ан шухӑшла
Вир пӑтти ҫинчен.
Курман ӑна...
Соя чустине кӑшла-кӑшла
Ӗнене ӑсатрӑм вӑрмана.
Выртнӑ та тип ҫулҫӑсем ҫине
Тӗлӗк курнӑ,
Ыйӑха путса:
Симӗс хумлӑ тырӑ пуссине
Кӗнӗ те, пыратӑп пек утса.
Путене хаваслӑн авӑтать,
Тӳпере хӳкле калать тӑри.
Мана хирӗҫ пӗр этем утать,
Илтӗнет таҫтан сӑпка юрри.
Ӳсрӗ,
Ӳсрӗ,
Хӑвӑрт ҫывхарса,
Ҫав этем шур пӗлӗтсем таран...
Ак ӑна эп илтӗм палласа —
Ленин!..
Лӑпкӑн ыйтрӗ вӑл манран:
— Мӗншӗн эсӗ хурлӑхлӑ ҫапла?
Питӗ ҫиессӳ килет,
Куран?
Эп — асамҫӑ.
Мӗн парас,
Кала?

— Çăкăр,—
Ыйтрăм эпĕ,—
Пĕр турам...

Ленин
Тăчĕ те чĕрне вĕçне,
Хĕвеле илсе ик аллине,
Касрĕ,
Хĕлхемпе ĕнтсе питне,
Тӳпери кулачă чĕллине.
— Çамрăк тусăм,
Çи тăраниччен.
Эпĕ акнă тырă çăкăрне,—
Терĕ вăл куçран çухаличчен...
Кăпăшка чĕлле тутаниччен
Эп вăрантăм:
Йыхăрать анне...

XIX

Иртрĕ ик эрне хĕрӳ ĕçре
Халăх уй-хире тухнăранпа,
Шăтрĕç тулă калчисем хитре.
Çураки пĕтмен-ха...
Патакпа
Шăтăксем тăва-тăва,
Пăрçа
Сăрт хĕрне акатпăр.
Ĕнесем
Вăй пухаççĕ улăхра...
Куçа
Тар касса кĕрет пĕшкĕннĕçем.

Шăрăх.
Çумăр хуралса килет.
Макăрать шаланкă тӳпере.

Вăхăт-вăхăт аслати кĕрлет,
Сассипе шиклентерсе пире.
Шăп çак самантра сăрт тӳпинчен
Илтĕнчĕ арçын ача сасси —
Темĕн кăшкăрать...
Тукас Ваççи.
Те ялав, те тутăр аллинче...
Çумăр çилĕ тухнине пула
Ăнланма май çук сăмахсене.
— Тăвансем...
Ку — çĕнтерӳ пулас! —
Терĕ пирĕн кӳршĕ Укçине.
— Пулĕ те!..
— Вылять пуль вăрçăлла.
— Кунталла чупать!
— Ялавпала!
— Вут хыпса илмен-ши, теп, яла?
— Ан лăрка!
— Ырра пуль ку...
— Паллах!..

— Çĕнтерӳ!!! —
Ваççа,
Чупса çитсе,
Савнăçлăн пĕлтерчĕ çынсене.
Пăлаки аппа,
Çакна илтсе,
Анчĕ тĕшрĕлсе ана çине...
— Çĕнтерӳ-ӳ!!
Эй,
Çитĕ ĕçлесе!
Эхе-е-хей!
Çынсем!
Часрах — кунта!—
Кăшкăратăп эп сиккелесе,
Патакпа шакка-шакка кунтта...

Йӗрсе ячӗ,
Ҫӗр ҫине ларса,
Хурлăхлăн салтак матки Анна.
Пӗрисем кулаҫҫӗ савăнса,
Теприсем макраҫҫӗ — чăт кăна!

Ҫиҫӗм ҫиҫрӗ.
Аслати кӗрлет.
Ак пуҫларӗ ҫумăрӗ ҫума.
— Эй,
Макăрасем!
Ташлас килет!
Намăс уявра куҫҫуль тăкма! —
Терӗ те,
Куҫне шăлса,
Анне
Майӗпен пуҫларӗ ташлама...
Салтрӗ Кулине шур тутăрне,
Тытăнчӗ йӗрсе такмаклама:

«Нимӗҫ, тетчӗҫ. Гитлер, тетчӗҫ.
Урнă йытă евӗр, тетчӗҫ.
Урнă йытă мар иккен —
Ҫӗр ҫинчи эсрел иккен.

Арҫынтан ҫыру эп илтӗм:
Берлина ҫитетпӗр, тет.
Ҫӗнтерӳшӗн питӗ, питӗ
Тăрăшатпăр эпӗр те...»

Пăлаки,
Ури ҫине тăрса,
Туртрӗ пылчăкланнă кӗпине.
Ҫумăр витнӗ анана ҫăрса,
Кӗчӗ анлă ташă картине.

Эп те тус-тантăшсемпе пĕрле
Айкашатăп,
Выçнине манса...

Иртрĕ аслати,
Пушшипеле
Пĕлĕт кĕтĕвне хăваласа...

Çак хĕвеллĕ çумăр вăййинче
Симлĕ нӳрĕпе тулсассăн уй,
Асамат кĕперĕ айĕнче
Сӳнчĕ пирĕн чаплă акатуй...

## XX

— Эй,
Хăна,
Çитет реххетленсе.
Тăр — акатуйне васкас пулать,—
Ман çири утияла сирсе,
Нинук кин йĕкĕлтесе кулать.

— Виçĕмкун,
Кĕтӳ яма тухсан,
Ыйтрĕ сан çинчен пĕр шкул пики.
Ларнă пуль тути çине тусан...
Евитлес-ха,
Вăрçтăр кăшт инки...
Кин,
Çакна пĕлеймĕн эс пачах:
Шкул пики — тин çуралнă çеçке.
Вăл ытла таса,
Черчен,
Ачаш...
Çамрăк хутшăнма çурхи ĕçке.

## XXI

Ăшă сĕт ĕçсе,
Çикелесе,
Тухрăм эпĕ симĕс урама.
Чĕкеçсен эскорчĕ шилесе
Ман тавра пуçларĕ çаврăнма.

Пурçăнланнă курăк калчисем
Хĕр тути çинчи çемçе тĕкле.
Хутлăхра телейлĕ ачасем
Савăнса выляççĕ мечĕкле...

«Хура Шыв урамĕ кукăр-макăр,
Кашни кукăрĕнче сар çăка»,—
Çак юрра качча юрлаттармасăр
Ăсатмаççĕ халь те салтака...

Тӳрĕ мар чăнах кунти урам,
Юрăра çех юлнă çăкисем...
Шифер витнĕ çурчĕсем вара
Ялăмра пурте-пĕр çĕннисем.

Çамкисем çинче вĕсен — хĕвел.
Тĕреллĕ хашак,
Хапха юпи.
Çутă,
Аслă çурт-йĕрти тĕпел.
Асаматлă
Чӳрече хуппи.

Модине кура кермен тесе
Хăшпĕрне май пулĕ мухтама.
...Каçсерен чăваш,
Ĕç пĕтерсе,
Килĕнче курать халь Мускава.

## XXII

Тăван ялăм,
Савнă Хура Шыв,
Иртсе кайнă кив ĕмĕрсенче
Эс сахал-и тӳснĕ хура-шур
Патшапа пупсен пусмăрĕнче!
Таркăн чăвашсем ĕлĕк-авал
Хывнă имĕш санăн никĕсне.
Вырăнĕ пит меллĕ те аван —
Килĕшнĕ вăл Атăл чăвашне.

Çичĕ çăл тапса тухать кунта —
Шывĕ тутлă,
Симлĕ те таса.
Çывăхрах вăрман — çӳре вутта,
Ĕшнере çул утă тар тăкса.
Улăхра сăралăх пур хăмла,
Хурлăхан та,
Çĕмĕрт те пиçет.
Çĕр,
Хура тăпраллине пула,
Пулăхлă —
Тырпул хитре ӳсет.
Çарăмсан та çывăх пул тытма —
Хăш чухне шампа та леккелет,—
Çич çăлтан пуçланнă тăр çырма
Улăхра унта юхса кĕрет.
Ĕлĕк пулнă киремет,
Учӳк
Лăпкă вырăнта асаттесен —
Пӳлĕхрен пехетлĕх кĕтнĕ чух
Пурпĕрех телей пулман вĕсен.
Çутçанталăк ырлăхне кура
Пымалла пек пурнăçĕ ăнса —
Хура Шыв хресченĕсен вара

Майлашман вăл,
Кайнă юхăнса.
Пурăна киле пуппа тиек
Персе çитнĕ таркăнсен ялне.
«Куланай тӳле — виç лав тие,—
Тарăхнă ялйыш.
— Ытти — пупне...»
Çĕршĕн е çараншăн час-часах
Çапăçу пуçланнă ку енче,
Е Уйкел * мăкши вăрман касать,
Е лаша вăрлать «тутар пичче»...
Сенĕкĕ юнанă юппипе,
Чашкăрнă çави те:
«Касăл,
Вил!»
Е «вĕри çĕлен» ял çийĕпе
Варкăштарнă вутлă çавраçил:
Виçĕ хут тискер вут-кăварта
Çунса кайнă ял ним юлмиччен—
Çĕнĕрен çĕкленнĕ вăл татах
Феникс кайăк пек кĕл ăшĕнчен...

Революци тăвăлĕ вара
Чăваша,
Мăкша,
Тутарсене
Илсе тухнă çĕнĕ çул çине
Аслă Ленин чĕннине кура.

## XXIII

Шăп эрне иртсен,
Аки-сухи

---

* Уйкел — ял ячĕ.

Пĕтĕмпех вĕçленчĕ.
Пит аван!
Савăнать ялйыш — ман тус-тăван —
Чакнăран вăхăтлăха хуйхи.
Çарăмсан хĕрне —
Пулпăттине * —
Лашапа,
Машинăпа,
Çуран
Халăх ырăсла апат тĕлне
Килчĕ «Ленин çулĕ» колхозран.
Çамрăкки,
Ватти,
Ачи-пăчи
Хĕвĕшет хăвалăх хĕрринче.
Акă иртрĕ Элтиван мучи —
Орден шур сухалĕ айĕнче.
Ярăнса утать Тунна инке
Пӳштĕр тытнă хӳхĕм кĕпепе.
Çамрăк чух вăл пулнă пуль пике —
Халь те тӳп-тӳрех-ха пĕвĕпе.
Альтютти инке çех сăнĕпе
Танлашма пултарĕччĕ унпа —
Вилнĕ вăл...
Ăна асилнипе
Туйрăм тем çитменнине чунпа.
«Çук тата Микуç мучи умра,—
Шухăшларăм эпĕ хурланса.—
Урăх çын паян хавхаланса
Юрă пуçлĕ çак акатуйра...»
Мĕн тăвăн,
Йĕрки çапла тĕнчен:
Çын çĕре кĕрет,
Элчел çитсен.

* Пулпăтти — улăх ячĕ.

«Ырă çыннăм,
Тăр-ха!»
Тенěрен
Чěрěлмě вăл пурпěр çěнěрен...

### XXIV

— Эй,
Хăна,
Çěкле кăтра пуçна —
Шăкăлчи анать çӳçне çăлма! —
Пынă тăнă аккапа йысна —
Эреветлě мăшăр —
Ман çума.
Ик ěçчен,
Ытарайми тăван!
Мухтанатăп эпě вěсемпе:
Пурăнаççě тулăхлă,
Аван,
Кӳлěнсе ял ěçěнче тěпе;
Иккěш юрă пуçласан вара —
Сар çу пек пуçлатăп ирěлме.
...Чăмрě тунсăх тарăн авăра
Кěвěçсе вилме.
Сасă пачě çывăхрах баян:
Йěкěлтет анчах-ха,
Юрламасть...
Халăх хавасланнă чух паян
Пуç усма чăнах та юрамасть.
Юрамасть!
Умра — чěвěлтисем,
Кăпăк ӳтлě мăкшă хěрěсем,
Йăлтăркка хура çивěтлисем —
Тутар Эптěкел * чиперккисем.

* Тутар Эптěкел — ял ячě.

Хамăр ялăн пикисем вара
Пуринчен хаваслă та хитре!
...Кайнă хыççăн шур Шупашкара
Вĕсене куратăп тĕлĕкре.

## XXV

Çитрĕç ак колхоз пуçлăхĕсем.
Секретарь те килчĕ райкомран.
— Хăй хисеп тăвать пире.
Туссем,
Ку — ырра пуль! —
Илтрĕм эп умран.
— Калаçатăн!
Кам уй-хир ĕçне
Районта малтан вĕçлекенни?!
— Тупăнсах тăрать сăлтав ĕçме.
— Парнесем илме — ĕçлекеннин!
— Парнине илетпĕр кĕркунне.
— Чим,
Шăплан.
Итлер-ха пуçлăха.
— Юлташсем,
Пуçлар акатуйне,—
Терĕ председатель халăха.
— Тав сире:
Ĕçлерĕр тăрăшса,
Кăшт канса илсессĕн те юрать.
Авă,
Пиçнĕ аш шăрши сарса,
Мăн хуран сире кĕтсе ларать.
Ĕçĕр,
Çиййĕр,
Савăнăр пĕрле,
Юрлăр,

Ташлăр,
Выльăр ăмăртса...
— Тĕрĕс-тĕкĕл таврăнăр киле,—
Хушрĕ секретарĕ,
Шӳт туса.
— Пĕрлехи пуху ыран ялта —
Парнесем илме пырас пулать...

— Ну чее çак секретарь юлташ! —
Манăн кӳршĕ кăмăллăн кулать.

XXVI

Акатуй пуçланчĕ!
Уяври
Ял çынни хаваслă та хитре —
Килĕшӳллĕ шӳчĕ,
Мыскари,
Сăмахне те чуптарать хивре,
Шухă ун екки,
Чĕри — вĕри,
Ăстăнĕ çунатлă та таса...
Пуçласан пĕри — юрлать тепри,
Ячĕшĕн çех мар,
Ура тапса.

Çирĕк айĕнче концерт кĕрлет —
Шавлă самана хунавĕсем!
Ялйыша эп вĕсемпе пĕрле
Каласа кăтартрăм сăвăсем.

Пăхаттир те пур Хура Шывра:
Кур-ха,
Мечĕкпе вылянă пек,
Тем те ӳкерет вăл сывлăшра
Икĕ тараса пуканĕпе!

Мыскараҫӑ ӗҫӗ — мерекке,
Кулӑш кушелне уҫсах тӑрать:
Турӑх янӑ тарӑн тирӗке
Чикнӗ те питне нухрат шырать...

Савӑнать хресчен!
Хевти пуртан
Юрӑпа ҫӗклет вӑл черккине,
Хӑй телейӗшӗн чунтан-вартан
Тав туса юратнӑ партине.

Ут,
Ялйышӑм,
Ҫӗршывна кура,
Малашне те Ленин ҫулӗпе!

...Сан ятна колхоз алтӑрӗпе
Эп ӗҫетӗп ҫӑлтӑрлӑ сӑра.

## ТУПМАЛЛИ


«Тăван чĕлхем — пин хĕлĕхлĕ кĕслем!..» . 3
1945 çул . . . . . . . . —
«Эрне хушши турттартăмăр кĕлте...» . . —
«Эп ватрăм чул...» . . . . . . 4
«Роба, роба...» . . . . . . . 6
«Тăри чĕппи вĕçме вĕреннĕ евĕр...» . 7
«Ăс ăнлану шырать, чĕре шырать ачашлăх...» . . . . . . . —
«Утса иртетĕн те умран...» . . . . 8
«Тин тухнă чĕпĕ евĕр шимплетсе...» . . —
«Илемпиçĕм, савнă Илемпиçĕм...» . . 9
«Çĕр эсĕ,— тетĕп эп сана...» . . . 10
Чăваш юрри . . . . . . . 11
«Кивĕ Атăл...» . . . . . . . 13
Нуша урапи . . . . . . . 14
«Шулапран шит тăршшĕ шĕвĕр шăкĕр...» 15
«Ялта пĕр-иккĕ пуль ун пек çуртсем...» . —
«Колхоз правленийĕ ун чух хура пÿрт пекчĕ...» . . . . . . . . 16
Ял юрри . . . . . . . . 17
«Çуркуннехи хир — сăпкари пепке...» . 18
«Аслати...» . . . . . . . . —
«Хĕвел хăй курăнмасть...» . . . 19
«Юман...» . . . . . . . . —
«Вут çунать, хĕм тустарса çунать...» . . 20
«Çурхи уйра хĕрÿ ĕçсем пуçланнă...» . —
«Çĕр çынни...» . . . . . . . 21
Инке . . . . . . . . . —
«Кивĕ уйăх, çĕнĕ уйăх, теççĕ...» . . 22
«Новгородри вече чанĕ пек...» . . . 23
Хусанкай тупăкĕ умĕнче . . . . 24
«Кĕр çитрĕ. Тĕссĕрленнĕ тÿпере...» . . 25
«Шап-шур чарлан—кĕсмен çунатлă кайăк...» . . . . . . . . 26
«Сăна-ха çил хускатнă тинĕсе...» . . —
«Хупах е вĕлтĕрен хуплană тарăн варсăр...» . . . . . . . . —
«Ăçта вилеççĕ чăвашсем?..» . . . 27
«Кĕрхи пĕрремĕш сивĕсем...» . . . 28
«Ейÿ чакса çитсен, шыв тăрăлсан...» . . 29
Асран кайми аки-сухи. Поэма . . . 30

**Василий ЭНДИП (Василий Иванович Антипов)**

# Р О Д Н И К

**Стихи и поэма**

На чувашском языке

Редактор *Ю. Г. Григорьев*
Художник *В. А. Чернов*
Художественный редактор *С. А. Владимиров*
Технический редактор *В. М. Михайлов*
Корректор *В. П. Окина*

НТ 25729. Сдано в набор 3/IX-1973 г. Подписано к печати 19-VII-74 г. Формат 70×108/32. Бумага типографская № 1. Физ. печ. л. 2,0. Усл. печ. л. 2,80. Учетно-изд. л. 2,82. Заказ № 4217. Тираж 1000 экз. Цена 33 коп.

Чувашское книжное издательство
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР
Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

Цена 33 коп.